24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 .

1941
ОКТЯБРЬ
17
ЭРНЕКУН
245 (7960) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Германири Коммунистсен Партин Центральный Комитечĕ чĕнсе калани)*

НИМĔÇ ХАЛĂХНЕ ТАТА НИМĔÇ ÇАРНЕ!

Рабочисем! Хресченсем! Мĕнпур граждăнсем!

Пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăма ĕмĕтленекен Гитлерăн ăссăр планĕсене пула Германи халăхĕ икĕ çул ытла ĕнтĕ хăйĕн юнне юхтарать. Çак йывăр кунсенче Германири Коммунистсен Партийĕ нимĕç халăхне тата нимĕç çарне чĕнсе калать. Пирĕн халăхшăн тата пирĕн çĕршывшăн Гитлер мĕнле пысăк хăрушлăх пулса тăнине эпир, коммунистсем, сире пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. Эпир сире ирсĕр Гитлера хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Гитлер вăл—вĕçĕ-хĕррисĕр нушалăх, пысăк намăслăх тата вĕçĕ-хĕррисĕр вăрçă пулса тăрать тесе каланă эпир сире. Анчах пирĕн нацийĕн телейсĕрлĕх ĕлĕк нихăçан та хальхи пек пысăк пулман. Гитлер Голландире, Бельгире, Францире, Балкансенче вăрçă тĕлĕшпе çитĕнӳсем туни мир патне илсе пымарĕ, вăл çĕнĕрен те çĕнĕ вăрçăсем патне, çĕнĕ те пысăкрах çухатусемпе хĕн-хурсем патне илсе пычĕ.

Июнĕн 22-мĕшĕнче Совет Союзĕ çине ирсĕррĕн те ултавлăн тапăнса, Гитлер нимĕç халăхне хирĕç чи йывăр преступленисĕр турĕ тата Германие çавтери пысăк йывăрлăхсем умне илсе тухрĕ. Иртнĕ тăватă уйăх хушшинчи вăрçăра нимĕçсен миллионшар салтакĕсем пĕр усăсăр вилчĕç. Халĕ каллех Гитлер нимĕç çарне вилесен тăвĕсем урлă çĕнĕ, чи юнлă наступлени тума хăваласа пырать. Вăл ывăнса тата тарăхса çитнĕ нимĕç салтакĕсене этемле мар ирсĕррĕн улталаса, çак наступлени татăклă çĕнтерӳ тата мир илсе килет, тесе шантарать.

Анчах аса илĕр-ха, нимĕç салтакĕсем! Гитлер пĕр çул каяллах ĕнтĕ: вăрçă мĕнле пĕтесси паллă тата Англие çĕмĕрсе тăкнă, тесе мухтанчĕ. Çакă вăл суя пулнă. Унтанпа Англия татах та вăйлăрах пулса тăчĕ. Кăçалхи июль уйăхĕнче Гитлер Хĕрлĕ Çара пĕтерсе тăкнă, тесе пĕлтерчĕ. Çакă вăл суя пулнă. Хĕрлĕ Çар хирĕç тăрасси татах та вăйланчĕ, хăватланчĕ. Паян вара салтаксем хăйсемех тата вĕсен семьисем çак йывăр чăлăха ытларах та ытларах ăнланса илеççĕ: Совет Российин вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк территорийĕнче сарăлса кайнă çапăçăвăн хирĕнчен миллионшар та миллионшар нимĕçсен хăйсен килĕсене нихăçан та тавăрăнаймĕç. Германири нихăш правительство та нимĕçсем пĕтĕм ăруне, Гитлер кĕртсе янă пек, нихăçан та вилĕм шăтăкне киревсĕррĕн кĕрте-кĕрте яман.

Çак юнлă катастрофа умĕнче кашни нимĕç хăйне çакăн пек ыйту парать: Совет Российине хирĕç çакăн пек преступленийлĕ вăрçа мĕншĕн пуçланă-ха? Совет Союзĕ çине тапăнни çинчен пĕлтернине илтсен эпир пурте мĕнле хумханнине эсир астăватăр. Вырăс халăхĕ нимĕç халăхĕн тусĕ пулнине тата çакна вăл 1918 çултанпа сахал мар кăтартса панине эпир пĕлнĕ. Вăл Германие Версалĕн йывăр кунĕсенче пулăшса тăчĕ. Германия пĕр пĕччен тăрса юлнă вăхăтра Рапаллора Совет Союзĕ Германипе договор турĕ. Германипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен пакт тунине эпир пĕлнĕ. Совет Союзĕ çак пакта çирĕппĕн пăхăнса пынине эпир пĕлсе тăнă. Июнĕн 22-мĕшĕнче Гитлер нихăçан та нимĕнле жалобăсемпе претензисем те тăратман. ССР Союзĕ çине ултавлăн тапăннă хыççăн Гитлер суйса каланисене пурне те фактсем сирсе ярасçĕ. Совет Союзĕ мар, Гитлер çак çулăн пуçламĕшĕнче Совет Российин чиккисем патĕнче пысăк çар вăйĕсене пухса тăратнине пирĕн миллионшар салтаксем çирĕплетсе памă пултараççĕ. Совет Союзĕ çине тапăнма лайăх позицисем йышăнас тесе Гитлер нимĕç войскисене Финляндие, Румыние тата Болгарие ячĕ. Гитлер приказĕ тăрăх нимĕçсен сывлăшри вăйĕсем малтан нимĕн те асăрхаттармасăрах советăн мирлĕ хулисем çине бомбăсем пăрахрĕç. Вăрçă пуласси çинчен пĕлтермессĕрех, Гитлер Совет Российине хирĕç нимĕç çарне ултавлăн кăларса ячĕ. Совет Союзĕ Германи çине тапăнма шутланă пулсан, вăл нимĕçсен çарĕ тапăнассине кĕтсе тăман пулĕччĕ. Паллă ĕнтĕ, Совет Союзĕ хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене Совет çĕршывĕ çине Германи çарĕ тапăнса кĕнĕ хыççăн кăна мобилизацилерĕ. Фактсем Гитлерах айăпларĕç. Вăл вара çак тискер вăрçă тĕрĕслĕхлĕ вăрçă пулать тесе нимĕç халăхне ĕнентерме пултараймарĕ, çак вăрçă кирлĕ пулнине тата вăл пурпĕрех пулмалла пулнине çирĕплетсе параймĕ.

Гитлер Совет Союзĕ çине ăна çаратса пĕтерес, унăн чĕтăварĕсемпе тата пуянлăхĕсемпе Англие хирĕç пыракан вăрçăра усă курас, США-на хирĕç вăрçă тума хатĕрленес тесе тапăнчĕ. Совет Союзне хирĕç пыракан çаратуллă вăрçăпа нимĕçсен çăткăн плутократĕсем тата нацистла пуçлăхĕсем пуйса юласшăн. Анчах çак вăрçăран нимĕç халăхĕшĕн нимĕнле усă та çук. Çак çаратуллă вăрçа пула Геринг концернĕ кăна пуянрах пулĕ, Германи халăхĕ татах та чухăнрах пулĕ, нумай миллионлă вырăс халăхĕ вара Германин нихăçан килĕшми тăшманĕ пулса тăрĕ.

Гитлер хăйĕн политикине тытса пырса халăхсене пусмăрлакан кăна мар, çавăнпа пĕрлех инçене курма пултарайман тата ăссăр политик пулни курăнчĕ. Хăйĕн ăссăр та инçене курман политикине пула вăл çакна кăна тума пултарчĕ: Англия, ССР Союзĕ тата США пĕрлĕхлĕ фронта пĕрлештерĕç. Гитлер икĕ фронтпа вăрçă туса пыраснинчен хăранă. Чăннипе илсен вара вăл хăйне хирĕç тăракан виçĕ аслă державăсен союзне туянчĕ, çакă вăл Германие хирĕç тăракан хăватлă державăсен виçĕ фрончĕ пулса тăрать. Çакăнтан ăссăртарах тата çакăнтан тăмсайрах политика урăх пулма пултараймасть.

Нимĕç рабочийĕсем! Тĕнчери пĕртен пĕр социализмлă государствăна хирĕç вăрçă туса пыма эсир Гитлера чăрмантарса пыманни, рабочисемпе хресченсем хуçа пулса тăракан çĕршыва хирĕç вăрçма эсир заводсенче хĕçпăшăлсем хатĕрлени сирĕннĕн намăс япала пулса тăмасть-и-ха ĕнтĕ? Çапла тунипе эсир хăвăра валли татах та йывăр чуралăхăн сăнчăрĕсене хатĕрленине эсир ăнланмастăр-и вара?

Нимĕç салтакĕсем! Хăйĕн çĕршывне, хăйĕн ирĕклĕхне, хăйĕн социализмлă стройне пыттăрăн хӳтлекен халăха хирĕç пыракан вăрçăра эсир хăвăрăн юнăра тăкса реакци ландскнехчĕсем пек чыссăр вилĕмпе вилесшĕн-и вара эсир?

Нимĕç халăхне çак преступленийлĕ вăрçă çителĕклех пулĕ. Вăл уншăн нушалăх, телейсĕрлĕх тата намăслăх илсе килчĕ. Нимĕç халăхĕ мир тăвассăн. Анчах Гитлер вăрçăра тунă кашни ӳсĕмех вăрçа малалла тăсать кăна, çухатусене ӳстерет, Германие тĕпсĕр шăтăка татах та шаларах туртса кĕртет. Пирĕн халăх вăрçăн виçĕмĕш хĕлне йывăр ĕçпе ывăнса, выçлăхпа аптăраса, тăхăнмалли тумтирсемсĕр тата атă-пушмаксăр, хăйĕн ывăлĕсен пурнăçĕшĕн хăраса чĕтресе, питех те хытă шикленсе кĕтсе илет.

Германи йĕри-тавра унăн тăшманĕсен тарăхăвĕ çĕкленсе пырать, вĕсем чуралăхпа террорăн пусмăрне текех тӳссе пурăнасшăн мар. Çак чуралăха кĕрсе ӳкнĕ тата хĕнхур тӳсекен халăхсем Гитлера хирĕç туса пыракан вăрçă—тĕрĕслĕхлĕ вăрçă. Нимĕç халăхĕ хăйĕн çине ирĕклĕхе юратакан халăхсене пĕтерсе пыракан палачăн намăс рольне илме пултараймасть.

Вăл хăй ирĕклĕхлĕ пулас тет пулсан, вăл хăйĕн çинчен Гитлер преступленийĕсен ирсĕрлĕхне сирсе пăрахас тет пулсан, унăн Европăри халăхсен ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвне тата пуринчен малтан Совет Союзĕн ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçине пулăшса пымалла.

Çак вăрçă—Германи халăхĕшĕн шанчăкăр вăрçă пулса тăрать. Гитлер Совет Союзне хирĕç хăйĕн мĕнпур резервисене кĕртсе ячĕ, анчах çапах та вăл совет халăхне тата унăн Хĕрлĕ Çарне çĕнтерме пултарайрас çук. Совет Союзĕн материальнăй тата моральнăй резервисем вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк. Кашни фронт хыçĕнче çĕнĕ фронт пур. Малалла куçнă кашни пуçăмшăн нимĕç салтакĕсем юнпа тата вилесемпе тӳлеççĕ. Нимĕç çарĕ Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра хăйĕн юнне юхтарса пĕтернĕ вăхăтра вара Англия хăйĕн тĕнчери империйĕн пур кĕтессисенче те питех те пысăк вăйсем пухса пырать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсене пулăшма хăйсен гигантла пысăк çар промышленноçне пĕтĕмпех ĕçе ярасçĕ. Пĕтĕм тĕнчери çакăн пек коалицине Гитлер çĕнтерме пултарать, тесе ухмаха ернĕ çын кăна шутлама пултарать. Гитлер пурпĕрех поражени тӳсмелле.

Хăйĕн уççăнах курăнса килекен вилĕмне туйса тăрса, Германие çĕнĕрен те çĕнĕ авантюрăсене туртса кĕртсе, Гитлер вăл хăй поражени тӳсни Германишĕн катастрофа пулать тесе суйса, нимĕç халăхне хăйĕн çумне сăнчăрласа лартма хăтланать. Анчах истори вĕрентнĕ тăрăх, преступленийллĕ правительствăсене сирпĕтсе антарнине пула халăхсем нихăçан та пĕтсе ларман. Пачах урăхла! Çавăн пек правительствăсене сирпĕтсе антарни халăха çĕнĕ вăйпа чечекленсе пыма, материальнăй пурнăçпа мораль енчен çĕкленсе пыма пулăшнă.

Нимĕç халăхĕн пĕртен-пĕр çăлăнăçĕ вăл—вăрçа пĕтерсе лартни пулать. Анчах вăрçа пĕтерес тесен, Гитлера сирпĕтсе антарас пулать. Гитлерпа унăн шайкки Германие тытса пынă чухне вăрçă чарăнма пултараймасть. Пирĕн халăх хăйĕн кунçулне вĕçне çитиех Гитлерпа сыхăнтарать пулсан, эпир хамăр, нимĕçсем, Германире йĕркелĕх туса хумасан, Европăна фашистла чумаран тасатас ĕçе ытти халăхсене паратпăр пулсан, вара пирĕн халăха хуйхă çеç пулĕ.

Вăхăт çитрĕ, пирĕн халăх Германи çĕршывĕн кунçулне хăйĕн аллине илмелле, вăрçа пĕтермелле тата хисепе тивĕçлĕ мир тума тăрăшмалла. Вăрçă асапĕсене текех чăтса тăма пултарайман мĕнпур нимĕçсене, фронтри салтаксене, вĕсен семьисене, рабочисемпе хресченсене тата тылри мĕнпур граждăнсене чĕнсе эпир çапла халатпăр: вăрçа чарса лартассишĕн кĕрешĕр! Германие çăлассишĕн кĕрешĕр! Гитлер—вăл вĕçĕмсĕр вăрçă. Гитлер çулĕ халăха пĕтерсе тăкасси патне, çĕршыв арканса каякки патне, катастрофа патне ертсе каять. Çак çул вăл—нимĕç халăхĕн çулĕ мар.

Нимĕç халăхĕн хăйĕн урăх çулĕ пур. Çак çул вăл нимĕç халăхне гитлерла пусмăрлăх режимĕнчен хăтарасси урлă, юлашкинчен малашне çапах та мирлĕ пурнăçпа пурăнакан тата пĕтĕм халăх ĕмĕтленнĕ пек пĕтĕçсе тăракан Германие çĕнтерсе илесси урлă выртать. Çакă вăл плутократиллĕ тискеркайăксем тата фашистла вăрă-хурахсем хуçа пулса тăман Германия, пирĕн тӳрĕ кăмăллă ĕçчен халăх влаçа тытса тăракан Германия пулать. Çав Германире ĕçсĕрлĕх пулмасть, унта ĕç илме гаранти паракан право пулать, унта хресчен хăй ĕçлесе тунă продуктсемпе хăй ирĕккĕн усă курать. Çав Германие вăл фашистла варварствăна пуçĕпех пĕтернĕ Германия пулать. Çав Германире этемĕн обществăри положенине унăн пуянлăхĕ тата вăл мĕнле семьерен тухни мар, унăн пултарулăхĕпе ĕçĕ татса памалла пулать. Çав Германире пĕрисен çавтери пуянлăхĕпе теприсен хăрушла чухăнлăхĕ хушшинчи хирĕçӳсем пулмĕç. Çав Германия вăл пĕтĕмĕшлĕ те никама пăхăнман Германия, пĕртанлисем хушшинче танлă Германия пулĕ, мĕнпур халăхсемпе мирлĕ пурăнакан Германия пулĕ.

Рабочисемпе хресченсем тата мĕнпур граждăнсем! Çавăн пек Германишĕн кĕрешĕр! Çавăн пек Германи туса хунни Германи халăхĕ çак вăрçăра тунă чăн-чăн аслă çĕнтерӳ пулса тăрать. Эсир çак тĕрĕс те тивĕçлĕ çул çине тухмасан, сирĕн Германи çарĕпе Германи государствипе пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă чухнехи пек мар хăрушлăрах çапса аркатнине тӳссе иртерме лекет. Çакă вăл Германие вакласа тăкассине тата Гитлер Европăна ССР Союзне тӳстернĕ вăрçă тăкакĕсене татмалла пулассине пĕлтерет.

Гитлерпа унăн шайккине—геббельсене, герингсене, гиммлерсемпе риббентропсене шăлса ывăтар!

Салтаксем! Вăрçа пĕтерĕр! Наступлени тума пăрахăр!

Рабочисем! Гитлерăн вăрçă машинине пур майсемпе те чарса пырăр!

Хĕрарăмсем! Хăвăрăн упăшкăрсене, тăванăрсене, ывăлăрсене фронтран тавăрма ыйтăр!

Нимĕç халăхĕ! Халăхлă Германишĕн, мирлĕ те ирĕклĕ Германишĕн кĕрешĕве—малалла!

ГЕРМАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ
Вильгельм ПИК,
Вильгельм ФЛОРИН,
Вальтер УЛЬБРИХТ,
Герберт ФУНК,
Фриц АРНДТ,
Михель ЖИДЕРКИРХНЕР,
Иване Гертнер ЭРАЗМУС,
Рихард ШТАЛЬМАН.

*) Нимĕç чĕлхипе çырнă çак çырăва нимĕçсен вилнĕ унтер-офицерĕ Штольц сумĕнче тупнă.

Совет халăхне саламлани

И. В. Сталин юлташ ячĕпе çакăн пек телеграмма килнĕ:

Леопольдвиллре (бельгийски Конго) пурăнакан бельгиецсем, 1914—1918 çулсенчи вăрçăн участникĕсем, Хĕрлĕ Çар тата совет халăхĕ фашизма татăклăнах çĕнтерессишĕн хăюллăн та паттăрăн тăрса çапăçнинчен тĕлĕнсе чĕререн хĕпĕртени çинчен пĕлтерĕççĕ. (ТАСС).

Грецин ССР Союзĕнчи посланникĕ г. Пипинелис Мускава килнĕ

Кăçалхи октябрăн 14-мĕшĕнче Грецин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ г. Пипинелис Мускава килне çитнĕ.

Курски вокзалра г. Пипинелиса Ютçăршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй Отдел заведующийĕ Ф. Ф. Молечков юлташ кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле тата октябрĕн 15-мĕшĕнче фронтăн Хĕвеланăç енче лару-тăру япăхланнă. Немĕçсен фашистла войскисем пирĕн чаçсене хирĕç питĕ нумай танксем, мотопехота илсе килнĕ тата пĕр участокра пирĕн оборонăна татса кĕнĕ.

Пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç геройла çапăçасçĕ, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ, анчах çак участокра пирĕн войскăсен ирĕксĕрех каялла чакма тивнĕ.

Октябрĕн 13-мĕшĕнче немĕçсенне 36 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, октябрĕн 15-мĕшĕнче Мускав патĕнче противникăнне 9 самолет персе антарнă.

* * *

Пăшал çĕкленĕ пултаракан граждăнсене пурне те çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе совет çĕршывĕн хулисемпе ялĕсенче икĕ эрне хушши ĕнтĕ занятисем пулса иртеççĕ. Хăйĕн тăван çĕршывне хӳтлеме пĕтĕм халăх çĕкленсе тăрать. Миллионшар совет çыннисем винтовкăна, пулемета вĕренеççĕ, вăрçă искусствине хăнăхаççĕ.

Горький хулинче çар ĕçне вĕренме лайăх оборудованиленĕ вуншар пунктсем тунă. Допризывниксем винтовкăн материальнăй чаçĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Боевой патронсенчен перес ĕçе тусa ирттернĕ. Ярославль тата Иваново хулисенче çар ĕçне вĕренмелли пунктсенче занятисем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Занятисем хыççăн боецсем хăйсен предприятийĕсенче караул службинче пулаççĕ.

Ленинграда пурне те çар ĕçне вĕрентесси çапăçу условийĕсенче пулса иртет. Танксене пĕтерекен истребительсен, пулеметчиксен, снайперсен отрячĕсене тунă. Воронеж хулинче ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентесси анлăн сарăлса кайнă. Отрядсем тактикăллă вĕренӳсене тухаççĕ, вăрăм вăхăт хушши походсем туса ирттереççĕ, пиçĕхеççĕ, йывăрлăхсене сирсе яма вĕренеççĕ.

Донбасри ĕççыннисем çар ĕçне пысăк тимлĕхпе вĕренсе алла илеççĕ. Хăватлă патриотла туйăмпа хавхаланса çĕкленнĕ горниксем, металлургсем, рабочисем тата инженерсем вĕренӳ программине мĕнле пулсан та хăвăртрах тата лайăхрах вĕренсе çитес тесе пурне те тăваççĕ. Ворошиловград хулинчи Климовски тата Артемовски районсенче занятисем организованно иртсе пыраççĕ. Машинăсем тăвакан заводри тимĕр-трехсотник Носиков юлташ, хăйĕн юлташĕсене хĕçпăшала кĕске срокрах тата отлично вĕренсе алла илме чĕнсе, çапла каланă: «Паян эпĕ сменăра виçшер норма тултаратăп, виçĕ çыннăн ĕçлетĕп, мĕншĕн тесен эпĕ хамăн малатукпа тăшмана çапса аркатмалли çĕнтерĕве туптанине пĕлетĕп. Ыран эпĕ алла хĕçпăшал тытса çапăçăва кайма тата фашистла ирсĕрсене пĕтерсе тăкма хатĕрех тăратăп».

Октябрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, Хĕвеланăç енче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

Немĕçсен фашистла войскисем çапăçăва çĕнĕ чаçсем кĕртсе пынă.

* * *

Ленинград патне пымалли вырăнсене хӳтлекен пирĕн чаçсем Германин 58-мĕш дивизинчи салтаксен пысăк группине тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем сивĕ çанталăк пуçланса кайнă май тата совет войскисен контратакисем вăйланса пынă май салтаксен вăрçас хастарлăхĕ чакни çинчен каласа параççĕ. Тыткăна илнĕ Айзель çапла каласа парать: «Темиçе эрне ĕнтĕ фронтра инçете пемелли орудисенчен татти-сыпписĕр персе тăраççĕ. Полкра пурнăçа сахал мар курнă ватă салтаксем те пур, анчах та кун пек вăйлăн кĕрлесе тăнине пирĕнтен нихăшĕ те илтмен-ха. Эпир вут-кăвар ăшĕнчи пекех асапланатпăр. Окоп ăшĕнчен пуçа çĕкленме те май çук. Сылтăмра та, сулахайра та, умра та, хыçра та снарядсем çурăлса сирпĕнеççĕ. Снарядсем окопсен ăшĕнче те час-часах сирпĕнме тытăнчĕç. Пуçа чикетĕн те чĕрĕ çĕр сумне лапчăнса кĕтетĕн, татах мĕн чухлĕ пурăнмалли юлчĕ-ши тесе, минутăсене шутлатăн. Уйăх хушшинче эпир пĕр хутчен те çăвăнман. Пире пыйтăсем çисе ярасçĕ. Манăн ӳте кĕсен-çăпансем пăрахасçĕ. Фашистсем десант группи антарнă пулнă, пирĕн боецсем ăна пĕтерсе тăкнă.

Çапах та немĕçсен уйрăм чаçĕсем пирĕн оборона çинелле савăлланса кĕме пултарнă. Çав чаçсене хирĕç çапăçусем Калинин хули патнелле пымалли вырăнсенче пыраççĕ. Тăшмана хирĕç пирĕн войскăсем вăйлăн тăраççĕ пулин те, хăй пысăк çухатусем тӳсет пулин те, тăшман хула патнеллех сĕкĕнет.

Капитан С. БУБНОВ.
(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 15-мĕш).

Калинин хули енче

КАЛИНИН ЕНĔ, октябрĕн 14-мĕш. **(Спец. корр.).** Юлашки кунсенче фашистсем хăйсен атакисене Калинин хули енче вăйлатрĕç. Вĕсем кунталла хăйсен çĕнĕ войскисене, танкĕсене, бронемашинисене куçарса килчĕç. Вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшмана хирĕç хăватлăн çапăçаççĕ. Стеклов командирăн боецĕсем тăшман атакисене темиçе хутчен сире-сире янă, вĕсем хăйсем йышăнса тăракан рубежа çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Ытти чылай участокренче те пирĕн войскăсем фашистсен наступленине ăнăçлăн çапа-çапа сирсе пăрахаççĕ. Фашистсем десант группи антарнă пулнă, пирĕн боецсем ăна пĕтерсе тăкнă.

Çапах та немĕçсен уйрăм чаçĕсем пирĕн оборона çинелле савăлланса кĕме пултарнă. Çав чаçсене хирĕç çапăçусем Калинин хули патнелле пымалли вырăнсенче пыраççĕ. Тăшмана хирĕç пирĕн войскăсем вăйлăн тăраççĕ пулин те, хăй пысăк çухатусем тӳсет пулин те, тăшман хула патнеллех сĕкĕнет.

Капитан С. БУБНОВ.
(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 15-мĕш).

Манчестер хулинче Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн эрни пулать

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ноябрĕн пуçламĕшĕнче Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх ӳрнине туса ирттерме Манчестер хулин лорд мэрĕ хула комитечĕ тунă. Консерватинăй, либерална, лейбористла партисен тата коммунистсен партин представителĕсем çак мероприятие туса ирттерме хăйсем енчен пулăшу парасси çинчен пĕлтернĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **Укерчĕн çинче:** Н-ски часть боецĕсем Н. ял патĕнче (Хĕвеланăç енче) штыклă атакăна кĕреççĕ.

С. ФРИДЛЯНД фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Чугунçул работникĕсем патĕнче

Çĕрпӳ станцин начальникĕ Кириллов, дежурнăйсем Васильевна Григорьев юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçре ытти работниксене пример кăтартса пыраççĕ. Ахальрен мар ĕнтĕ Чугунçул транспорчĕн Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович юлташ вĕсене иртнĕ çулта премипе панă.

Станцинчи железнодорожниксем хăйсен ĕçĕсене кăтартуллăн туса пынипе пĕрлех обществăллă ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ, воскресниксем тăваççĕ. Станци коллективĕ юлашки 2 уйăх хушшинче воскресниксем туса тăван çĕршыва 3 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă, 3 вагон тимĕр-тăмăр тиесе ăсатнă. Воскресникре ĕçлесе илнĕ укçа-тенкĕсене оборона фондне тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем туянма панă.

Станцинче ĕçлекен железнодорожниксен октябрĕн 4-мĕшĕнче пуху пулса иртнĕ. Пухура чугунçул работникĕсем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илсе пĕр-пĕрне Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Ăмăртăвăн тĕп пайтăвĕсем—хĕле отлично хатĕрленесси, пĕр браксăр, пĕр аварисĕр ĕçлесси.

Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене кашни железнодорожник вăхăтра пурнăçласа пырать. Вĕсем октябрĕн 10-мĕш тĕлне водокачкăна, стрелочниксен будкисене юсаса ăшăтнă. Çавăн пекех груз хумалли складсене те юсаса пĕтернĕ.

— Вак-тĕвек ремонтсене çитес хунсенчех пĕтеретпĕр. Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултарнине эпир çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илетпĕр,—тет станци начальникĕ Кириллов юлташ.

Г. ПЕТРОВ.

Ăмăртăва хутшăнчĕç

КУКЕÇ. Октябрĕн 8-мĕшĕнче район центрĕнчи рабочисемпе служащисем митинг туса ирттерчĕç. Митингра ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Миронов юлташ Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан подшипниксем тăвакан заводри рабочисемпе работницăсен чĕнĕвĕ çинчен каласа панă. Вăл районри рабочисемпе служащисене пурне те активлăн ăмăртăва хутшăнса, Аслă Октябрь уявне ĕçре пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме чĕнчĕ.

Миронов юлташ сăмахĕ хыççăн райпотребсоюз председателĕ Гагарин юлташ тухса каларĕ. Вăл Октябрь уявĕ тĕлне IV-мĕш кварталти таварçавăрнăш планне 50 процентран кая мар тултарма тата куллен кирлĕ таварсене яланах çителĕклĕ таран кӳрсе килсе тăма обязательство парса, финанс работникĕсене ăмăртăва чĕнчĕ. Финанс работникĕсем чĕнĕве йышăнчĕç.

Районри перекет кассин заведующийĕ Ростов юлташ та заем укçи пухассине Октябрь уявĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарма обязательство илчĕ. Вăл обязательствăна пурнăçлама заем уполномоченнăйĕсем пĕр-пĕринне ăмăртса ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ.

Митингра çавăн пекех район центрĕнчи подразделенинче вĕренекен военнообязаннăйсем те пурте пулчĕç. Вĕсем программăна лайăх ăнланса вĕренме, дисциплинăна çирĕп пăхăнма пулчĕç. Ку тĕлĕшпе отделенипе отделени тата кашни уйрăмăн пĕр-пĕрин хушшинче ăмăрту договорĕсем турĕç.

Т. ЛОГИНОВ.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

СĔНТĔРВĂРРИ. Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан завод коллективĕн пуçăравне сӳтсе-явнă хыççăн. Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке тата урапа-çуна туса кăларакан артель коллективĕ Октябрь революцийĕ 24 çул тултарнине ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хăй çине татăклă обязательство илчĕ. Çав обязательство тăрăх рабочисем Аслă Октябрь уявĕ умĕнчи социализмлă ăмăртăва пуçарса ярса, продукци туса кăлармалли çулталăк планне ноябрĕн 7-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарма пулчĕç.

Халĕ унта хĕрӳ ĕç пырать. Бондарь Белоголовский юлташ кулленхи ĕç нормине 300 процент таран тултарса ĕçлет. Снушов, Тимофеев, Камбулов рабочисем ĕç нормине 200—220 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Артельри пĕтĕм рабочисен хисепĕнчен 30 процентĕ ытла ĕç нормине 200 процентран иртнĕ тултарасçĕ. Двухсотниксен йышĕ ӳссе пынипе пĕрлех, рабочисем хушшинче тĕрлĕрен профессисемпе ĕçлеме вĕренесси те сарăлсах пырать, Халиччен бондарь е колесник ĕçĕсене туса пынă рабочисем халĕ сунасем туса кăларас ĕçпе ĕçлеççĕ. Хĕле валли çирĕп тата лайăх сунасем туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

МИКИШ ПАВАЛĔ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

☆ ★ ☆

Тăшманшăн Мускав патнелле пымалли çула питĕрсе хурар!

ВЯЗЬМА ЕНĔ, октябрĕн 14-мĕш. (**Телефонпа хамăр спец. корреспондентран**). Мускав—хăрушлăх умĕнче. Пирĕн тăван столица патне пымалли инçетри вырăнсене тăшман кĕтĕвĕсем пухăнса пыраççĕ. Гитлерла бандитсем Мускав патне хăйсен юнлă аллисене тăсаççĕ. Вĕсем Мускава мĕнле те пулин тытса илме, унăн урамĕсене юнпа шăтерме, унăн пуянлăхĕсене çаратса пĕтерме шут тытнă.

Анчах çакă вăл пулаймĕ! Тăшмана эпир Мускава кĕртместпĕр. Тăшман Мускавра пулаймĕ. Пирĕн столицăна пырса кĕме ĕлкĕриччен тăшман хăйĕн юнĕпе чыхăнса ӳкет. Мускав оборони тĕрекленет, ăна хӳтлекенсен тăшмана хирĕç тăрас вăйĕ ӳссех пырать. Хĕрлĕ Çар воинĕсем фашистсен урнă атакисене паттăрлăн çапăçса сире-сире яраççĕ, фашистсене çавтери пысăк çухатусем кӳреççĕ. Нимĕçсем халлĕхе Мускав патнелле куçса пыраççĕ пулсан та, вĕсен хăйсен салтакĕсен вилисăн кулисем урлă каçса пыма лекет. Гитлеровецсем Мускав патне пымалли вырăнсене тӳснĕ пысăк çухатусем пек инçета та нихăçан та тӳссе курман.

Çапах та тăшман вырăнĕ-вырăнĕпе пирĕн оборонăна шăтарса кĕрет, Мускав патнелле туса пырать. Çавна ăна çапла ăнлантарса пама пулать. Гитлер хăйĕн мĕнпур резервисене мобилизацилесе тата Европăри хăй оккупацинленĕ çĕршывсене çаратса, хăй аллинчи мĕнпур вăйсене пĕтĕмпех Хĕвелтухăç фронтне хăваласа килет. Нимĕçсен вăйĕсем Вязьма енче пирĕннинчен уйрăмах нумай.

Çак условисенче Хĕрлĕ Çар воинĕсем халăхи вăхăтра туса пыракан кĕрешӳ уйрăмах геройла кĕрешӳ пулса тăрать. Вĕсем, пирĕн аслă тăван çĕршывăн чăн-чăн ывăлĕсем, çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхне хӳтлеççĕ, кашни çĕр лаптăкĕшĕн паттăрлăн тăрса çапăçаççĕ. Фронтăн уйрăм участокĕсенче пирĕн вăйсем тăшманниннинчен сахалтарах. Çав участоксенче нимĕçсем наступлени тума хăтланни ăнăçлă пулманнине пирĕн боецсем паттăрлăн та хăюллăн çапăçнипе кăна ăнлантарса пама пулать.

Н-ски часть умне питех те паха рубежа хӳтлес тата хамăран соединенин флангне витсе тăрас задача лартнă пулнă. Фашистсем пирĕн часа темиçе кун хушши татти-сыпписĕр пыра-пыра атакăланă, флангсенчен çавăрăнса кĕме пăхнă, хăйсем чи вăйлăн пырса çапма шутланă участокран пирĕн боецсен тимлĕхне сирсе ярас тесе, тĕрлĕ майпа чеелесе хăтланнă. Çапах та çакăн пек хăтланнисем тăшмана нимĕн те паман. Нимĕçсем Н-ски часăн тылне те сăрхăнса кĕме пĕр хутчен мар хăтланса пăхнă. Анчах та тыла çапăçусенче пулса тухнă Степанов юлташăн подразделенийĕ сыхласа тăнă, вăл тăшманăн мĕнпур атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

Çапăçусем фронтăн мĕнпур участокĕсенче татти-сыпписĕр пыраççĕ. Вязьма енче вара уйрăмах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Виçĕмкун нимĕç танкĕсен колонни наступлени тума хăтланнă, анчах та ăна вăйлăн хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ. Çапăçу кунĕпех пынă, тĕттĕм пулса çитсен кăна тăшманăн вак-тĕвек уйрăм подразделенийĕсем пирĕн оборонăна шăтарса кĕме пултарнă. Пирĕн чассем контратака тунă та çав подразделенисене пурне те пекех пĕтерсе тăкнă. Танксене хирĕç кĕрешмелли оборонăна тĕрĕс организацилени мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине çав çапăçу тата тепĕр хут кăтартса панă. Çак тĕлĕшпен Панкратов командирăн артиллерисчĕсем уйрăмах палăрса тăраççĕ. Вĕсем çулсене хӳтлес ĕçе аван организацинленĕ. Тăшман танкĕсем çав вырăнта пирĕн оборонăна тавраран кайса шăтарса кĕме темĕн чухлĕ хăтланса пăхсан та, вĕсем пур çĕрте те пирĕн артиллерин хаяр вут-çулăмĕ айне пыра-пыра тăрăннă.

Мускав йĕри-тавра çирĕп те шанчăклă оборона пулса тăрать. Çав оборонăна кунсемпе мар, сехетсемпе тĕреклетсе пымалла. Мускав тăшман пырса кĕмелле мар крепость пулса тăмалла. Мускава эпир çапла тăваткăр та!

(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 15-мĕш).

Совет артиллерийĕ Новгород патĕнче

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ЕНĔ, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС спецкорĕсем). Малти позицисем çинчен бинокльпе пăхсан авалхи Новгородăн палăлăхĕсем, Кремль, стенисем, монастырь лайăхах курăнаççĕ. Халь çав стенасем хыçĕнче, çарлака çирĕп çуртсенче немĕçсен фашистла войскисем тăраççĕ.. Новгород хулине тытса илнĕ хыççăн вĕсем çав хуларан Ленинграда геройла хӳтлекенсене хирĕç çапăçма подкрепленисем тăратмалли база туса хучĕç.

Новгородран тухакан шоссе çулĕпе çурçĕр-хĕвелтухăçĕнелле Чудов патнелле фашистсем кунсерен тенĕ пекех хăйсен пехотине, артиллерине, танкĕсене илсе пыма хăтланаççĕ. Мĕншĕн тесен Ленинград çывăхĕнче Германин фон Лееба ертсе пыракан çурçĕрти çарĕ халама çук пысăк çухатусем тӳсет. Çав пит те кирлĕ стратегиллĕ магистраль тата унпа çывăх çулсене пирĕн войскăсем яланах хăйсен вилĕмлĕ вучĕ айĕнче тытаççĕ. Пирĕн войскăсем кунта Волхов шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнчи çулпа тĕр майлă вырнаçса тăнă. Ленин хули патнелле каякан тăшман подкрепленийĕсене путарса тăрас ĕçре полковник Петропавловский командир пулса ертсе пыракан артиллери тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Çав çулăн кашни участокне тĕрлĕ хăватлă тĕрлĕрен калибрлă артиллери татти-сыпписĕр контроллесе тăрать. Тĕп магистраль çинче пирĕн инçете перекен ывăр артиллери пуçпулса тăрать, çывăхрахри çулсене пĕчĕкрех калибрлă артиллери персе тăрать.

Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи çак участок çинче уйăх çурă ытла ĕнтĕ майор Вишневский командир пулса ертсе пыракан ывăр артиллери чăрĕ кĕрешет. Унăн хăватлă орудийĕсене пит те ăстан маскировка тунă. Çавăнпа та фашистсен разведка авиацийĕ пирĕн огневой позицисем ăçта вырнаçса тăнине пĕлме хăтланничен нимĕн те тухман.

Талăкĕ-талăкĕпе темиçе тесетке наблюдательсем çав çул çинчи е ăна çывăх выртакан тăшман позицийĕсем çинчи тем пек пĕчĕк хусканăва та пĕр чарăнмасăр асăрхаса тăраççĕ. Асăрхаса тăрас ĕçе йĕркеллĕ системăпа тытса тăни фашистсен коммуникацийĕсене вăйлă контроль туса тăма май парать, вара кирлĕ чух пĕр самант хушшинче тĕллевлĕ те хăватлă, ним хăварманнинчен пĕтерекен вут тăшман пуçĕ çине тăкăнма пуçлать. Вишневский артиллерийĕ тĕлленĕ тĕле тивретмесĕр пени нихăçан та пулмасть, унăн снарячĕсем шăп тĕлленĕ çĕре чи варрине пырса ӳкеççĕ. Пит те лайăх организацинленĕ наблюдени тĕл персе тивретме пулăшать. Мĕнле 10 минута хушшинче нимĕçсен наблюдательнăй пунктне çĕмĕрсе тăкнине тата боеприпассен складне сывлăша сирпĕтсе янине эпир хамăр куçпа куртăмăр.

Пĕррехинче çапла немĕç колоннисем çине кĕтмен çĕртен пеме пуçланипе малтанхи снарядсемех тăшманăнне 10 автомашина, 15 повозка, 3 ывăр оруди пĕтерсе тăкнă. Çул тăрăх лашасем хуçисене ывăтса ярса ĕрĕхсе чупнинне, артиллери бригади хăраса ӳксе тарнине, вăрман çинче çăра хура тĕтĕм явăннине наблюдательсем лайăх курнă.

Пĕррехинче полк командирĕ патне партизан А. юлташ пынă. Вăл Новгород хулинчен туса фронт урлă каçса çаканта çитнĕ. Вăл Новгород хулинчи паркăнчен пĕринче тăшман танкĕсем, артиллерийĕ, автомашинисем тата бензоцистернисем нумай пухăнса тăнине çинчен каласа панă. Каçхине пирĕн артиллери çав парка «тасатма» тытăннă. Парк çинче вут хыпса тухни тата снарядсем çурăлни пирĕн артиллери тĕрĕс расчет тухăнне çирĕплетсе панă — тупă йĕтрисем тĕл пырса тивнине палăртнă.

Пирĕн артиллери персе тăни фашистсене аякран çавăрăнса çӳремелли çулсем шыраттарать, пĕчĕк çулсемпе çӳремелле тăвать. Анчах темле пĕчĕк çулпа пырать пулин те, тăшман çине пирĕн артиллери снарячĕсем тăкăнма пуçлаççĕ. Ленинград патнелле пыракан тăшмана час-часах пирĕн çăмăл тупăсемпе батарейăсем те çĕр сумне лапчăтса хураççĕ.

Юлашки 30 кун хушшинче Петропавловский полковникăн артиллери чăрĕ нимĕçсене пысăк çухатусем турĕ. Вăл тăшманăнне артиллерин 87 батарейипе миномётсен 43 батарейине путарса лартнă, 31 оруди, миномётсен 20 батарейине, пехота, боеприпассем тата продовольстви илсе пыракан 54 автомашинăна, 20 пулемет, темиçе çĕр повозка пĕтерсе тăкнă, фашистсен пехотин тем чухлĕ колонисене аркатса янă, вĕлерсе е амантса фашистсене 1.600 çын стройран кăларнă, боеприпассен 4 складне, вăйлă çирĕплетнĕ 14 блиндажа тата 17 ДЗОТ-а сывлăша сирпĕтсе янă. Çак чаплă ĕçсенчен чылайăшне Вишневский майорăн чăрĕ тунă.

Б. АФАНАСЬЕВ.
И. ДЕНЕНБЕРГ.

Оборона ĕçне вĕренеççĕ

Хĕрарăмсем те арçынсемпе пĕрлех, тăшмана çапса аркатма хăйсен çар пĕлĕвне ӳстерсе, курссенче вĕренеççĕ. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе хĕрарăмсем валли медсестрасен курсĕсем, сандружинăсем, ГСО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Сăмахран, РОКК Çĕмĕрле райкомĕ пуçарнипе медсестрасен курсĕ тата сандружина группи, ГСО кружокĕсем Улатăр районĕнче те медсестрасен курсĕ ĕçлет т. ыт. Çавăн пекех, Йĕпреç, Канаш, Шупашкар районĕсенче те медсестрасен курсĕсемпе санитарнăй дружинăсем аван ĕçлесе пыраççĕ.

И. ВДОВИНА.

Нимĕç войскисен çулĕ салтаксен виллипе тулса ларнă

БРЯНСК ЕНĔ, октябрĕн 14-мĕш. (**Хамăран спецкортан ¸ телеграф тăрăх**). Брянск енчи уйрăм районсенче нимĕçсем малаллах наступлени туса пыраççĕ. Ерипен пулсан та, çапах та вĕсем малаллах куçаççĕ.

Анчах та халăх пуранакан пĕр пункта та, территорин пĕр километрне те нимĕçсем çăлăллăн, çапăçусăр илме пултараймарĕç. Пирĕн войскăсем фашистсене пур çĕрте те питех те вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ.

Виçĕмкун, нимĕçсем Н-ски часĕн позицийĕсене атакăлама хăтланнă чухне, çав часть вĕсене лайăх урок туянтарчĕ. Çапăçу темиçе сехет хушши пычĕ. Неприятелĕн мĕнпур атакисене часть ăнăçлăн сире-сире ячĕ тата ăна хăй малтан вырнаçса тăнă позицисем патне тытса ывăтрĕ.

Çапăçура неприятель 30 танк, 100 автомашина, 10 оруди çухатрĕ, 1000 çынна çитти вилчĕç тата аманчĕç.

Политрук П. ТРОЯНОВСКИЙ.
(«Красная Звезда», октябрĕн 15-мĕш).

Мариуполь районĕнчи çапăçусем

КАНТĂР ФРОНЧĔ, октябрĕн 14-мĕш. (**Телеграфпа хамăран спецкортан**). Мариуполе илес тесе, немĕçсем хăйсен пур тĕрлĕ войскисен пысăк вăйĕсене пухса тăратнă. Вĕсем хула çине темиçе хутчен те атака туса пăхнă, анчах ĕç кашнинчех ăнăçсăр пулнă. Фашистсем çакăнта çĕнĕ войскăсем, çав шутра 100 ытла танксем, хăваласа килнĕ хыçăн кăна хулана хӳтлекен пирĕн чассем унтан тухса кайнă.

Пирĕн войскăсем оборонăн çĕнĕ рубежне организованнă чакса тăнă та çийĕнчех çапăçăва йышăннă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн чассем пĕр чарăнмасăр каялла чакаççĕ пулĕ тесе шутланă пулмалле неприятель. Тăшман пирĕн войскăсем хыççăн йĕрлесе пыма хăтланнă, анчах та ăна хăватлăн хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ.

Мариуполь немĕçсемшĕн питех те хакла ларнă. Хулашăн пынă çапăçусенче немĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе пин çын тата хĕçпăшалсем нумай сухатнă. Çĕнĕ рубежа пыракан çапăçусенче противник татах та пысăкрах çухатусем тӳсет. Пирĕн оборонăра тăракан чассем тăшман часĕсем малалла куçса пынине часа лартнă, анчах немĕçсем, пур енчен пăхсассăн та, малалла наступлени туса килес шанчăка пăрахмаççĕ-ха.

Т. ЛИЛЬИН.
(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 15-мĕш).

Хĕрлĕ ялавлă Балтика морякĕсем—черноморецсене

Ленинградран панă радиопередача

Октябрĕн 14-мĕшĕнче совет морякĕсен ячĕпе Ленинградран радиопередача пулнă. Малтанах Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн Военнăй Советĕпе Политуправленийĕ Хура тинĕс флочĕн морякĕсене чĕнсе каланине трансляцинленĕ.

Одессăна хăюллăн хӳтлекенсене,—тенĕ чĕнсе каланинче,—эпир уйрăмах тĕлĕнсе савăннипе саламлатпăр, Одессăна хӳтлекенсем икĕ уйăх хушши ĕнтĕ тăшман атакисене сире-сире яраççĕ çеç те мар, тата вĕсем хăйсем те фашистсене атакăлаççĕ.

Черноморец юлташсем, хĕрлĕ ялавлă балтиецсем тăшмана çĕмĕрсе тăкас тесе мĕнпур вăйран тăрăшаççĕ. Эпир ĕнтĕ тăшманăн 50 боевой каранпне, 156 транспортне тинĕсе путартăмăр, фашистсенне 300 ытла самолет персе антартăмăр, салтакĕсемпе офицерĕсене 20 пин çынна çити пĕтерсе тăкрăмăр.

Ленинград патĕнче тăшман çухатăвĕсем халех ĕнтĕ 100 пин çынна çитеççĕ.

Балтиецсем мĕнпур Совет Союзĕ тата Ленинград умĕнче нихăçан пăсăлми таса тупа турĕç: чĕре тапнă чухне, куçсем курнă чухне фашистсем Ленин хулинче нихăçан та пулаймĕç! Тăшмана тытса чарни сахал, ăна çĕмĕрсе тăкмалла, хамăран çĕр çинчен хăваласа ямалла.

Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ моряксен ăрăвĕ хăйĕн ашшĕсемпе аслашшĕсен революцилле традицийĕсене намăса кăлармĕ, паттăр Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕрешсе, фашистла çĕленкалтана çĕмĕрсе тăкма, хăйĕн тăван çĕршывне сыхласа хăварма пултарĕ. Эпир кирек мĕнле испытанисене те тӳссе ирттерĕпĕр. Тăшмана хытăрах çапар.

Унтан геройла Балтика морякĕсенчен пĕрине, «Киров» крейсер çинчи орудисенчен перекеке старший лейтенант Шварцберга сăмах панă. Вăл гитлерла суеççем пĕтерсе тăкнă тесе пĕлтернĕ Балтика флочĕ тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та, шыв çинче те тата шыв айĕнче те мĕнле майпа пĕр хĕрхенӳсĕр çĕмĕрни çинчен каласа панă. (ТАСС).

Швеци хаçачĕ гитлерла „çĕнĕ йĕрке“ çинчен

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Швеции «Гетеборгс Хандельс тиднинг» хаçат Гитлерăн Европăри халăхсене пăхăнтармалли планĕ арканса кайни çинчен статья пичетлесе хăларнă. Статьяра çапла каланă:

«Нимĕçсем оккупацинленĕ çĕршывсенче çĕнĕрен те çĕнĕрен çынсене асаплантарса вĕлерни çинчен кунсерен çĕнĕ хыпарсем килсе тăраççĕ. Ку вăхăтра нимĕçсем пуринчен ытла Чехире алкасаççĕ. Нейрат тума ĕлкĕрейменнине Гейдрих тăвать. Камăн представителĕсене халĕ пере-пере пăрахаççĕ, çав халăхсенчен ниташĕ те çавăн пек вĕлернисене нихăçан та манас çук. Гитлер вăрă-хурахĕсем çав халăхсене юн ăшне путарса асап кӳни—Германин «çĕнĕ йĕркене» пурнăçа пачах кĕртмелле мар туса хучĕ. Нацисем пĕр шухăшлă пулса ĕçлесси пĕри теприне вĕçĕмсĕр курайми пулнă нихĕç çинче тытăнса тăма пултараймасть. Оккупацинленĕ çĕршывсенче нимĕç наместникĕсем халăх правине хӳтлекенсене пурне те асаплантарса вĕлереççĕ. Халăхсем курса тăраççĕ: асаплантарса вĕлернисен пĕтĕм «айăпĕ»—вĕсен патриотизмĕ пулса тăрать. Террор мĕн чухлĕ ӳссе пырать, захватчиксене хурайманни те çавăн чухлех хаярланса пырать. Кам халăхсене тытса тăрас ĕçре террорсăр пуçне урăх майсем çинчен пĕлмест, вăл хăрушă вăйă вылять. Халăхсен курайманлăхĕ часах вĕçне çитиччене пулса çитĕ, тавăру сехечĕ çапса ярĕ. Тарăхса çитнĕ халăхсен тавăру хумĕ çавăн чух мĕнле формăсемпе палăрасси çинчен шухăшласан, пĕтĕм çанçурăм чĕтресе каять: мĕн акан, çавна вырса илĕн, тенĕ ваттисем».

Вăрçă перспективисем Италишĕн мĕнле пулмалла

СТАМБУЛ, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Меджлис депутачĕ Джахид Ялчин «Хабер» хаçатра статья пичетлесе каланă. Çав статьяра вăл çапла çырать: çитес хĕл Италишĕн калама çук пысăк йывăрлăхсем каларса тăратать, çав йывăрлăхсене пула Италия татăклă поражени тӳсет. Автор çакна астутарать: Италие халь те, иртнĕ вăрçăра та, вăл ытти çĕршывсенчен пулăшу илмесĕр çапăçнă чухне, яланах ларкăнă. «Африкăра,—тет Ялчин,—Англи войскисем кăшт кăна хĕсме тытăнсанах Грацианин пĕтĕм çарĕ сирпĕнсе кайрĕ. Италья-нецсем кам мала тухать тесе тавлашса чупнă пек тарчĕç».

«Вăрçă тăсăлса пыни Италие мĕн парĕ?»—тесе ыйтать малалла Джахид Ялчин.—Акă мĕн: топливо пĕтсе çитнипе—хĕллехи сивĕ, продовольстви çукпипе—йывăр выçлăх Италие пурпĕрех поражени умне илсе пырĕç».

Автор çапла палла тăвать: «Италихалăхĕн шухăш-кăмăлĕсем халĕ те чылаях хускаланса кайнă, Англи бомбардировщикĕсем Итали хулисем çине бомбăсем тăкма пуçласан вара Италихалăхĕ вăрçа хирĕç уççăнах тăрĕ».

Италири вăрттăн радиопередатчик

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 14-мĕшĕнче Римран паракан музыка радиопередачине чарса лартма тивнĕ, мĕншĕн тесен такам сасси Муссолинине: «Эсĕ Италие Гитлера сутрăн»,—тесе айăплана.

Францири çĕнĕ арестсемпе асаплантарса вĕлернисем

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Парижри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Парижра Лебражер ятлă француза хĕçпăшала законсăр тытса усранăшăн айăпласа асаплантарса вĕлернĕ. Çав агентствăн корреспонденчĕ Виширен çапла пĕлтерет: Клермон-Ферран хулинче суд 9 арçынна 2 хĕрарăма «коммунистла пропаганда сарнăшăн» айăпласа 9 çуллăха тĕрмене хупмалла приговор йышăннă.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германи влаçĕсем Парижра Гастан Пино ятлă француза ун патĕнче хĕçпăшал тупнăшăн асаплантарса вĕлернĕ тесе пĕлтернĕ.

Парижра динамит вăрласа тухса кайни

ЖЕНЕВА, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернине Женевăра илнĕ тăрăх, ĕнер револьверсемпе хĕçпăшалланнă тăватă çамрăк француз Жантинире боеприпассен склачĕ çине пырса тапăннă. Палла мар çынсем, хăйсемпе пĕрле 50 килограмм динамит илсе тухса, тарса пытаннă.

Норвеги халăхĕпе квислинговецсем хушшинчи юнлă тытăсусем

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçат çапла пĕлтерет: çак кунсенче Мюсен чугунçул станцинче квислингла дружинниксемпе местечкăра пурăнакан 500 çын хушшинче чăн-чăн çапăçу пулса иртнĕ. Квислинговецсем, парада васкаканскерсем, ларса пыракан поезд станцăна çитсен, халăх хушшинчен такăмĕ поезд чӳречинне бомба пăрахнă. Аллисене резина патаксем тата ытти хĕçпăшалсем тытнă квислинговецсем станцăна пухăнса тăнă халăх çине ывтăннă. Квислинговецсене пулăшма полицине нимĕç салтакĕсем пырса çитнĕ. Çавăнта пухăннă 500 çынран пурне те пекех амантнă. 50 çынна арестленĕ. Мюсен местечкинче суд туса коллективлăн штраф тӳлемелле тăваççĕ.

Çавăн пекех, политикăллă шухăш-кăмăлсем çĕкленнине пулах, Сарлоборг çывăхĕнчи Дегернестра та хĕçпăшаллă пысăк тытăсусем пулса иртнĕ.

Чехсен „Сокол“ обществине салатса яни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Гейдрих чехсен «Сокол» обществин организацине салатса яма приказ панă. Çав обществăна нимĕçсене хирĕçле оппозицине пулăшса пынă тесе тата чехсен Лондонри ушкăнĕсемпе çыхăнса тăнă тесе айăпларĕç. Обществăн нумайĕш руководителĕсене ишĕтерӳллĕ тата политикăллă ĕçсем туса пынă тесе айăпласа арестленĕ. «Сокол» организацин пурлăхĕсене туртса илнĕ.

Хэлл тата Нокс конгреса чĕнсе калани

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: государственнăй секретарь Хэлл тата тинĕс-çар министрĕ Нокс конгреса чĕнсе каласа Америкăн сутуилӳ парохочĕсене хĕçпăшаллантарас тата çар материалĕсене туртăрнă чухне çав пароходсене вăрçă пыракан зонăсене кĕме ирĕк парас шутпа нейтралитет çинчен калакан закона çĕнĕрен пăхса тухма ыйтнă.

США-ра пысăк пушар пулнă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Фолривер хулинче (Массачузетс штачĕ) пысăк пушар пулнă. Пушарта çар стратегийĕн материалĕсем, «Файрстон Раббер компани» ятлă компани аллинче тăнăскерсем, пит нумай пĕтнĕ. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пушарта 7 çурт, питĕ нумай тĕрлĕрен оборудованисем, 120 тонна каучук, нумай противогазсем, пуля шăтарайман бензин бакĕсем тата ытти материалсем пĕтнĕ. Пушар мĕнле сăлтавпа пулни палламар.

Обязательствăсене вăхăтра тултармалла

ÇĔМĔРЛЕ. Малта пыракан колхозсем пур ĕçсене те вăхăтра туса пыраççĕ. Тукаç ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоз государствăна тырпул тăратмалли обязательствăна пĕр уйăх каялла тултарнă. Çак колхоз натуроплата тыррине те 60 пăта яхăн ытлашши панă. Егоркинори «Большевик» колхоз тырпул обязательствине натуроплата тыррине тахçанах парса татнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсемпе единоличник хуçалăхĕсем хăйсен обязательствисене тултарас пирки пачах тăрăшмаççĕ. Акă, «Лесной огонек», Кăмашари «1-ое Мая», «Новая жизнь», «Ударник» колхозсем паянхи кунах хăйсен обязательствисене çуррине те пурнăçламан. Çавăн пекех, юлашки 15 кун хушшинче Тăван тата Вăрман Тăван ялсовечĕсенчи единоличниксенчен хатĕрлев пунктне пĕр килограмм тырă та пыман.

Колхозсенче государствăна тырă лесçе параççи колхозсен председателĕсенчен нумай килет. Вĕсем ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Акă, «Лесной огонек» колхозра (председателĕ Чирков юлташ) аван çапмалли машинăсем те, çумăрлă кунсенче аван çапма тунă витнĕ итемсем те хатĕр. Апла пулин те, çумăрлă кунсенче аван çапассине организацилемен. Комбайн та ахалех ларать.

Кашни колхозăн государство умĕнчи обязательствăна вăхăтра тултарассишĕн кĕрешмелле. Колхоз председателĕсен ку енĕпе çине тăрса ĕçлемелле.

Колхоз парăмсене срокчен тӳленĕ

ЭЛЕК. Хирлеппуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз государство умĕнчи укçа-тенкĕ обязательствине 100 процентчĕпех парса татрĕ. Кăçал аш-пăмалли обязательствăна тултарса, 1942 çулăн 7,22 центнер панă, кунсăр пуçне оборона фондне 3 сысна панă. Колхоз членĕсем те государство умĕнчи парăмсене срокчен пурнăçлама тăрăшаççĕ. Вĕсем кăçал çырăннă заем укçине 3.210 тенкĕ пĕтĕмпех парса татнă. В. Семенов, К. Егоров, С. Филиппова, И. Анисимов тата ытти чылай юлташсем ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене тӳлесе татрĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

ВĂРНАР. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе Иртеменкассинчи «Победа» колхозра комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксем ертсе пыраççĕ. Вĕсем хăйсем ăшă тумтирсем параççĕ, колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне кирлĕ пек туса пыраççĕ. Ăшă тумтирсем парас ыйтупа ятарласа 4 номер стена хаçачĕ кăларнă. Комсомолка Е. Назарова тата активист-колхозник В. Ключков—ăшă тумтирсем пухакан комисси членĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе 23 тир, 27 килограмм çăм тата алшиш-чăлхасем, алшăллисемпе тăласем нумай пухнă. Колхоз хĕрĕсем çăм алшишсемпе чăлхасем сыхассине хăйсем çине илнĕ.

ВЛКСМ пуçламăш организацин секретарĕ Ив. Зайцев пĕр çĕлĕк тата пĕр мăшăр портянка панă. Ялсовет председателĕ Е. Курбатов та пĕр çĕлĕк тата пĕр мăшăр тăла пачĕ. Активисткăсем: М. Васильева пĕр тир тата пĕр мăшăр тăла, Ольгăпа Ульяна Егоровăсем пĕрер алшăлли парса пулăштăрĕç.

Комсомолецсем ăнлантару ĕçне туса ирттернĕ хыççăн колхозниксем ăшă ăпаласем пухас ĕçе активлăн хутшăннă. Ватă колхозниксем: Фома Кротов икĕ тир, Прокопий Александров пĕр тир, М. Александров тата колхозницăсем Н. Сергеева, Д. Зайцева, Е. Потехина пĕрер тир пачĕç. П. Кашкина пĕр мăшăр тăла, пĕр çĕлĕк парать. Унăн ывăлĕ фронтра Гитлер йыткĕтĕвĕсене хирĕç малти позицисенче кĕрешет. Вăл пытти колхозниксене чĕнсе çапла каларĕ:

— Сыпçинсене хирĕç паттăрла кĕрешекен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă ăпаласем парасси кашни совет сыннин чи хисеплĕ тивĕçĕ. Эпир пана кашни ăшă ăпала тăшманăн вилĕмне сывхартать.

* * *

Канашри вагонсем хасакан заводри килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем ярса парасси пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Юлашки 5—6 кун хушшинче вĕсем 72 мамăк минтер, 82 алшăлли, 36 татăк супăнь, 3 бритва, 72 минтер пичĕ, 16 мăшăр чăлхапа алшиш, 8 кĕпе, 4 йĕм, 8 тӳшек çитти тата ытти ăпаласем те нумай пухнă.

— Пирĕн тăвансемпе упăшкасем Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçаççĕ. Эпир, тылра ĕçлесе, тăван боецсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăпса пыратпăр. Эпир паракан парнесем пирĕн боецсене тăшманпа çапăçма хавхалантарччăр,—теççĕ килхуçи хĕрарăмĕсем.

Çакă вăл—чĕререн тухакан сăмахсем. Заводри кашни хĕрарăм паян хăй çинчен манса Гитлерăн фашистла урнă кĕтĕвĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен тăван боецсене мĕнпе те пулин пулăшас шухăппа пурăнать.

Тырпул тухăçне ӳстернĕшĕн хушса тӳлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен кăларнă постановленине нумай колхозсене çĕнĕлле ĕçлеме вĕрентрĕ.

Нумай работниксем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивнăçне ӳстерес тĕлĕппе çине тăрса кĕрешрĕç.

Шупашкар Ĕмĕлĕнчи «Волга» колхоз членĕ Агриппина Абросимова юлташ 0,14 гектар çине сухан лартса 1.260 килограмм илес вырăнне 2.335 килограмм туса илнĕ. Çапла вара планпа пăхнинчен 1075 килограмм ытларах туса илнĕ. Колхоз правленийĕ ăна 268 килограмм сухан хушса панă.

Чăрăшкассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозра Евдокия Антонова иккĕмĕш çул доярка пулса ĕçлет. Вăл хăй çумне çирĕплетсе панă 6 ĕнерен октябрĕн 1-мĕш тĕлне планпа 4232 литр сĕт суса илес вырăнне 6248,65 литр суса илнĕ. Е. Антонова юлташа планран ирттерсе 2016,65 литр сĕт суса илнĕшĕн колхоз правленийĕ 301,5 литр сĕт памалла тунă.

Çичĕпӳртри Чапаев ячĕпе тăракан колхозри сурăх фермин заведующийĕ Ефим Смирнов юлташ кăçал 168 пус сурăхран 336 килограмм çăм илес вырăнне 358 килограмм илнĕ, вăл натурăпа çăм илет.

Районра кунашакал фактсем татах та нумай. Анчах хăшпĕр колхозсенче колхозниксене ĕçшĕн хушса парасси çине правленисем çиелтен пăхаççĕ. Туппай Ĕмĕлĕнчи «Красная Чувашия» колхозри хăмла бригадинчи звеносем 8 гектар çинчен тухăçлă хăмла туса илчĕç, анчах та кунта колхоз правленийĕ звеносем туса илнĕ хăмла тухăçлăхне уйрăмăн учета илмен, çавăнпа та звеноводсене ĕçшĕн хушса тӳлессинчен пăрса хăварнă.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсем вĕçленсе пынă май, районри çĕрĕç работниксемпе колхоз правленийĕсем кашни бригадăн, звенон тата выльăх-чĕрлĕх пăхакан работниксем ĕçĕсене тĕплĕн шута илсе пыни кирлĕ. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивнăçне планпа цăхнинчен ирттерсе тултарнине хура ĕçшĕн хушса тӳлессине тĕрĕс туса пымалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6643. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления по делам полиграфической промышленности, издательств и книжной торговли при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. б. 58 1/64 п. л.